Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене сăмах паратпăр

Ытларах хамăр çине шанас пулать

Сăмахăм – Чуманкасси ял тăрăхĕ, кунта пурăнакансем, ку ял тăрăхĕн пуçлăхĕн ĕçĕ-хĕлĕ пирки. Ăнсăртран мар. Акă, депутатсен районти Пухăвĕн пĕр ларăвĕнче район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ял тăрăхĕн пуçлăхне Людмила Германовна Ковалевана диплом парса хавхалантарчĕ. Чăваш Республикинчи муниципаллă пĕрлешӳсен канашĕ ку ял тăрăхĕн пуçлăхĕн ĕçне районта чи лайăххи тесе палăртнă. Сăмах май кун пек диплома çак ял тăрăхĕнчи Г.Н. Тимофеев та тивĕçрĕ. Вăл вара – районти чи лайăх староста. Вăлах депутатсен ял тăрăхĕн Пухăвĕн депутачĕ те.

Апла пулсан вĕсенчен вĕренмелли, пĕлмелли çук мар. Çавна май Л.Г. КОВАЛЕВАНА калаçăва чĕнтĕм, хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ пирки тĕплĕнрех каласа пама ыйтрăм.

– Людмила Германовна, ял администрацине, хыçăн ял тăрăхне эсир нумай вăхăтах мар, икĕ çул ытларах кăна ертсе пыратăр. Апла пулсан та ӳсĕмсем çук мар. "Раççей Федерацийĕнче вырăнти самоуправление йĕкелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" Федераллă саккун вăя кĕнĕренпе çулталăк ытларах кăна иртрĕ. Пĕтĕм ĕçе çĕнĕлле йĕркелеме тивет. Хĕрарăм пуççăн ку ĕçе туса пыма çăмăлах мар пулĕ.

– Çапла, ял администрацине ĕçе киличчен 26 çул ытла Чуманкасси шкулĕнче ĕçлерĕм. Шкул директорĕн çумĕ пулнă. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов хăйĕн хушăвĕпе вăхăтлăх ял администрацийĕн пуçлăхне ертсе пыма çирĕплетсен хирĕçлесе тăраймарăм. Кайран вара суйлавра ял çыннисем мана шанни палăрчĕ, ытларахăшĕ маншăн сасăларĕ. Шăла çыртсах суйлавçăсен шанăçне тӳрре кăларассишĕн ĕçе кӳлĕнме тивĕ.

Вырăнти самоуправлени органĕсем пирки калакан çĕнĕ саккун вăя кĕнĕренпе иртнĕ вăхăт хамăрăн ĕçхĕле çĕнĕлле туса пыма хăнăхмалли, хамăрăн çĕнĕ тивĕçсене алла илмелли тапхăр пулчĕ. Унччен вырăнти влаç органĕсене пырса тивмен нумай ĕçсем халĕ ял тăрăхĕсем çине куçрĕç. Пĕр-пĕринпе курнăçни, канашлани, ыйтусене пĕрле татса пани пулăшса пычĕ. Вун ултă ял тăрăхĕн пуçлăхĕсем пĕр-пĕрне пулăшса, канашлусенче час-часах çĕнĕлле, унччен тĕл пулман ыйтусем çине хуравсем илсе ĕçлеме вĕренсе пытăмăр. Кунпа пĕрлех района ертсе пыракансемпе специалистсен пулăшăвне те курса-туйсах тăтăмăр.

– Кирек епле ĕç те хальхи вăхăтра чи малтанах укçа-тенкĕпе, бюджетпа çыхăннă. Хыснана укçа ытларах пухассине мĕнре куратăр?

– Ял тăрăхĕн депутачĕсемпе укçа-тенкĕпе çыхăннă ыйтусене тăтăшах сӳтсе яватпăр. Кунта тĕп задача çапла пулмалла тесе шутлатпăр: чи малтанах хамăр территорире вырнаçнă предприятисемпе организацисене ӳсĕм çулĕпе аталантарса пырасси çине тимлĕрех пăхмалла. Мĕншĕн тесен вырăнти бюджета укçа пухăнасси вĕсем мĕнле ĕçлесе пынипе тӳрремĕнех çыхăннă.

– Иртнĕ çулталăка ЧР Президенчĕ "Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталăкĕ" тесе палăртнăччĕ. Ку енĕпе ял тăрхĕнче мĕнле ĕçсем туса ирттерме май килчĕ? Вăрттăнлăх мар, юлашки вăхăтра çынсен кăнттамлăхне, чурăс чунлă пулнине, кăмăл-сипет, ыр кăмăллăх енĕпе вĕсем чухăнланса пынине асăрхамасăр тăма пултараймастпăр.

– Ку ĕçсене депутатсемпе пĕрлех вĕрентӳ, культура ĕçченĕсене те анлăн явăçтарма тăрăшрăмăр. Çамрăксемпе, вĕренекенсемпе ку ыйтусемпе тĕл пулусем, каласусем сахал мар ирттернĕ. Иртнĕ çул Чăваш чĕлхин кунне халалласа администраци çуртĕнче тĕслĕх библиотека уçрăмăр. Çакă ял çыннисемшĕн те, çамрăксемшĕн те чăннипех пысăк савăнăç пулчĕ. Халĕ кунта кирек кам та Интернета тухма та пултарать. Сăмах май, кун пек библиотека Исетерккĕре те кăçал уçалчĕ. Ăна Ачасен çулне халалларăмăр. Кунпа пĕрлех пушă выртакан çĕр лаптăкĕсем çинче культура ĕçченĕсемпе çĕр улми лартса хăварассине йĕркеленĕччĕ. Кĕркунне вара унта кăларса пухнă продукцие сутса тунă укçапа хамăр вăйпах Культура çурчĕсенче пĕчĕк юсав ĕçĕсем туса ирттерме, музыка аппаратури туянма май çитертĕмĕр. Кăçал вара Чуманкассинчи Культура çуртне çут çанталăк газĕпе хутса ăшăтма тытăнма кирлĕ документсене хатĕрлесе çитертĕмĕр.

Çавна та каласа хăвармалла. Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕ пĕр çулталăклăх ĕç мар. Малашне те ку енĕпе ĕçлесе пырас пулать.

– Çынсем ялта çурт-йĕр çавăраççĕ, çĕр ĕçне кӳлĕнеççĕ пулсан, ялсем пĕтес çук, вĕсем малашлăхĕ те пур. Сирĕн ял тăрăхĕнчи ялсенче те паян çурт-йĕр çавăракансем сахалах мар пулас.

– Ялта çурт-йĕр çавăракансене пур майсемпе те пулăшма тăрăшатпăр. Патшалăх та юлашки вăхăтра ку енĕпе май пур таран çăмăллăхсем туса парать. Çак çăмăллăхсене чăннипех тивĕçлисем вĕсемпе усă курма пултарччăр тетпĕр.

Иртнĕ çул акă 5 çемье строительство ĕçĕсене туса ирттерме каялла тавăрса памалла мар 622 пин тенкĕлĕх субсиди илчĕ. Ку çăмăллăха тивĕçнисенчен пĕри трактористра, иккĕшĕ фермăра сыснасем пăхнă çĕрте, тепри пăрусем пăхнă çĕрте, пиллĕкмĕшĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăх бухгалтерийĕнче кадрсен пайĕнче ĕçлеççĕ. Кăçал та ку пулăшупа усă курма черетре 9 çемье ĕнтĕ.

"Агропромышленность комплексне аталантарасси" наци проекчĕпе килĕшӳллĕн килти хушма хуçалăха аталантарма чылай çынна çăмăллатнă кредит илме пулăшрăмăр. Иртнĕ çул та ку енĕпе патшалăх пулăшăвĕпе усă куракансем сахал мар пулчĕç, кăçал та кредит илекенсем йышлă.

– Çулсем тăвас ыйту çинче те чарăнса тăнă пулăттăм.

– Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров иртнĕ çул ялта пурăнакан кашни çынна тӳрремĕнех пырса тивекен пысăк пĕлтерĕшлĕ указ çине алă пусрĕ. Ку вăл кашни ял патнех асфальт сарнă çул çитересси. Çак задачăна икĕ çул хушшинче татса пама палăртнă. Кунпа пĕрлех Президент ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, ял çыннисем умне те çивĕч задачăсем лартрĕ. Çулсем тăвас енĕпе чи малтанах вырăнсенче тирпейлĕх, тасалăх ыйтăвĕсемпе çине тăрса ĕçлекен ялсене пулăшмаллине уйрăммăн палăртрĕ. Ку енĕпе вара пирĕн ĕçлемелли çук мар-ха. Камсем хăйсен ялĕсене тирпейлĕ те таса тытаççĕ, çав ялсенче çулсем те маларах пулĕç. Апла пулсан кашнийĕнех пĕрле кар тăрса ĕçлес пулать. Депутатсемпе ялсен старостисен пуçарулăхĕнчен, вĕсем халăха ертсе пыма пултарнинчен нумай килет ăнăçу. Чăвашсен ырă йăлипе ĕлĕкхи пек ниме туса урамсене тирпей-илем кĕртме майсем пур.

Президент указĕн майĕсемпе усă курсах иртнĕ çул Çĕньял Апаша асфальт çулпа çыхăнтарма пултартăмăр. Ял çыннисемшĕн чăннипех те пысăк парне пулчĕ вăл. Кăçал Чуманкасси ялне çул туса пĕтермелле. Черетре Исетерккĕ, Отаккă ялĕсем. Çулсем тума тытăнма проектпа смета документацине хатĕрлесе çитернĕ ĕнтĕ.

– Ялсенче пурăнакансене таса шывпа тивĕçтересси те хальхи вăхăтра чылай çĕрте çивĕч ыйтусенчен пĕри пулса тăрать.

– Пирĕн патра та ку çаплах. Ял тăрăхĕнчи ялсенче шыв ыйтăвĕ çивĕч. 7 ялта та шыв пăрăхĕсем çĕнĕрен хурса хăварма документсене, проектсене иртнĕ çулах хатĕрленĕ. Анчах та укçа-тенкĕ çитменни ĕç-пуçа тытăнма чарса тăрать. Апла пулин те ку ыйтăва татса парасси те пурнăçланасса шанса тăратпăр.

– Людмила Германовна, тирпей-илем ыйтăвĕ патнех таврăнар-ха. "Пĕрлĕхлĕ Раççей" ("Единая Россия") политика партийĕн Чăваш Енри уйрăмĕ 2007 çулхи мартăн 30-мĕшĕнчен пуласа апрелĕн 30-мĕшĕччен килçурт таврашне, урамсен, парксен, скверсен территорийĕсене тирпей-илем кĕртес тата юсас, йывăççемпе тĕмсем лартса хăварас тĕлĕшпе ятарлă уйăхлăх ирттерме чĕнсе каларĕ. Унта хутшăнса мĕнле ĕçсем туса ирттереме май килчĕ?

– Старостăсем, вырăнти депутатсем ертсе пынипе тата пуçарнипе ялсенче субботниксемпе воскресниксем тăтăшах ирттерн�с. Тасалăхпа тирпейлĕх ыйтăвĕсене кун йĕркинчен кăлармастпăр. Çава картисем юхăнса кайнисем пур. Вĕсене те йĕкене кĕртес пулать.

Килте пухăннă çӳп-çапа чылайăшĕ урама е ытти вырăна кăларса тăкать. Çавăнпа та вĕсем валли кашни ял патĕнчех çырма-çатрасенче ятарлă вырăнсем палăртрăмăр.

Çĕрлехи вăхăтра ял урамĕсенче тĕттĕм пирки ыйтусем пулаканччĕ. Иртнĕ çулах ку ыйтăва татса пама май килчĕ. Халĕ вара кашни ялтах счетчиксем вырнаçтарнă, çĕрлехи вăхăтра электричество лампочкисем çунаççĕ.

– Пĕччен суран – типсех пырать, халăх сурать – кӳлĕ пулать тесе ăнсăртран каламан ĕнтĕ чăвашсем. Хăвăр ĕçĕрте камсем çине ытларах шанатăр?

– Пысăк вăй – депутатсем. Кунсăр пуçне кашни ялтах старостăсем пур. Кулленхи ĕçре вĕсем çине таянмасăр май çук. Вĕсем вырăнсенчи лару-тăрăва та лайăхрах курса-пĕлсе тăраççĕ, кирлĕ сĕнӳпе те пулăшма пултараççĕ.

Уйрăммăн палăртас пулсан вара депутата тата ял старостине Г.Н. Тимофеева, А.И. Иванов, Г.Г. Михайлов, Н.Н. Замятина, В.К. Гордеев, Ю.И. Скворцов, Г.Н. Илларионова депутатсене, Е.М. Кадыкова, С.В. Герасимов, В.Я. Колосьев, Г.А. Семеновский, А.В. Степанова старостăсене асăнмалла. Шанатăп, пĕр-пĕрне ăнланса килĕштерсе ĕçлесе пырсан кирек епле тĕллевсене те пурнăçа кĕртме пулатех.

В. ШАПОШНИКОВ
каласнă.

Сăн ӳкерчĕксенче: район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов Л.Г. Ковалевана тата Г.Н. Тимофеева пысăк чыса тивĕçнĕ ятпа саламлать.

"Пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту"

Ыйтусене ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ М.А. Михайловский хуравлать

Район хаçачĕн июнĕн 9-мĕшĕнчи номерĕнче "Раççейри радио" регионти редакцийĕ "Пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту" передачăн пичет вариантне хаçатра пичетлесси пирки пуçарупа тухнине пĕлтернĕччĕ. Пĕрремĕш ыйтусем пулнăччĕ те. Халĕ вара вулакансен ыйтăвĕсем çине панă хуравсене малалла пичетлетпĕр.

ЫЙТУ: Телевиденипе тата радиопа "Единая Россия" парти, ку партин республикăри уйрăмĕ туса ирттерекен ĕçсем пирки тăтăшах пĕлме пулать. "Единая Россия" партин Чăваш Республикинчи уйрăмĕ пирки тĕплĕнрех каласа пама пултараймастăр-ши?

С.И. БАРМИН.
Куславкка хули.

ХУРАВ: Пирĕн партин XII отчетпа суйлав конференцийĕ кăçалхи июнĕн 16-мĕшĕнче иртрĕ. Унта çакăн пек цифрăсем асăнчĕç. Республикипе парти членĕсем 22 пин çын. Паллă ĕнтĕ, вĕсем хушшинче пуçлăхсем кăна мар, хуласемпе ялсенчи ĕçченсем те сахал мар. Патшалăх служащийĕсем парти членĕсем хушшинче 3,1 процент. Влаç органĕсенче ĕçлекенсем 11,3 процент, 14 процент рабочисем, 22,7 процент вĕрентӳ ĕçченĕсем, промышленноçра парти членĕсен 15,7 процентчĕ ĕçлет, ял хуçалăхĕнче – 5,3 процент. Пенсионерсем те пур. Вĕсем 2,3 процент. Студентсем 4 процент. Арçынсем 36,6 процент пулсан, хĕрарăмсем – 63,4 процент. "Единая Россия" парти ретĕнче республика министерствисемпе ведомствисен 12 ертӳçи, муниципаллă пĕрлешӳсен 22 пуçлăхĕ. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен 86 процентчĕ – "Единая Россия" парти членĕ.

ЫЙТУ: Ĕç ветеранĕсене, вăрçă участникĕсене тата 2-мĕш ушкăн инваличĕсене хваттер укçи тӳлессипе мĕнле çăмăллăхсем параççĕ?

А.А. ФАДЕЕВА.
Çĕмĕрле хули.

ХУРАВ: Хваттерте пурăнăшăн тата коммуналлă çăмăллăхсемшĕн тӳлессипе 50 процентлă çăмăллăх çаксене параççĕ:

– ĕç ветеранĕсене. Çăмăллăхпа çавăн пекех вĕсен çемйисен ĕçлеме пултарайман членĕсем те усă курма пултараççĕ;

– Аслă Отечественăй вăрçă участникĕсемпе вĕсен çемйисен пур членĕсем те;

– пур ушкăн инваличĕсем те.

ЫЙТУ: Măшăрсем уйрăлнă хыççăн ача миçе çула çитиччен алимент тӳлесе тăма палăртнă?

М.А. ПЕТРОВА.
Çĕмĕрле хули.

ХУРАВ: Раççей Федерацийĕн Çемье кодексĕпе ашшĕ-амăшĕ хăйсен çул çитмен ачисене тытса тăма тивĕç. Ку тивĕç ачасем 18 çула çитиччен пырать.

Шкул ачисен çуллахи канăвĕ

Хăйсен сывлăхĕсене çирĕплетрĕç

Хальхи саманара пурăнма çирĕп сывлăх, тарăн пĕлӳ кирлĕ. Тăван тавралăхри çут çанталăк вара сывлăх тĕрекĕ пулса тăрать. Ăна ачаран упранине нимĕн те çитмест. Çавна шута илсе Шетмĕпуç шкулĕ çумĕнче сывлăха çирĕплетмелли "Солнышко" лагерь ĕçлерĕ. Лагерь ĕçне-хĕлне

В.Б. Петрова лагерь пуçлăхĕпе В.В. Смирнова воспитатель йĕркелесе пычĕç. Техĕмлĕ апатпа куллен Г.Н. Александрова повар тивĕçтерчĕ. Л.И. Серафимова завхоз та хăйĕн тивĕçĕсене аван пурнăçларĕ.

Легерьти пурнăç пуян. Ирхине ирех зарядка, кайран линейка, ирхи апатлану, кайран вара хавас вăйăсем, шкул территорине тирпей-илем кĕртесси, ăс-тăна аталантармалли, сывлăха çирĕплетмелли вăйăсем.

Сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕç лагерьти кунсем. Канупа сывлăх лагерьне 20 ача тулли кăмăлпа çӳрерĕ.

В. ПЕТРОВА.

Партисен пурнăçĕнчен

Черетлĕ конференци иртнĕ

2007 çулхи июлĕн 5-мĕшĕнче КПРФ Муркаш райкомĕн черетлĕ тăваттăмĕш парти конференцийĕ иртнĕ. Унта райкомăн пĕрремĕш секретарĕн Т.И. Ораинан 2006 çулхи март уйăхĕнчен тытăнса 2007 çулхи июлĕн 5-мĕшĕччěнхи тапхăрта туса ирттернĕ ĕçĕ-хĕлĕ пирки тата тĕрĕслевпе ревизи комиссийĕн отчечĕсене итленĕ, КПРФ Чăваш рескомĕн Шупашкар хулинче иртекен черетсĕр 57-мĕш парти конференцине кайма делегатсем суйланă.

Хамăр инф.

Ыйту – хурав

Çын вилме те пултарать

Çын харăсах миçе пыл хурчĕ сăхнине тӳсме пултарать?

Пыл хурчĕн наркăмăшĕпе аптăраман (аллергисĕр) çын харăсах 5-25 пыл хурчĕ сăхнине тӳсме пултарать. 300 яхăн сăнă лексен çын аптăрать, 500 яхăн хурт сăхсан çын вилет.